# ТĂВАН ÇЫРУЛĂХА ĂШĂ ХУМ ПЕК ÇĔКЛЕНСЕ КИЛНĔ УШКĂН ЕРТŸÇИ

**Николай ТЕВЕТКЕЛ**

ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

Акă, паллă тĕпчевçĕ, тишкерÿçĕ, тавра пĕлÿçĕ тата сăвăç Виталий Станьял та 60 çул тултарчĕ. Вăхăт урапи кăлтăртатса та, шалтăртатса та – шухăш-кăмăла çÿçентерсе те е тата чăтма çук мыскараллă пулăмсемпе тĕлĕнтерсе-култарса та ĕмĕр инçетне чупать. Ĕмĕр инçечĕ вара – пирĕн пултару курăмĕ. Пĕрин вăл – сăмса умĕнчех, теприн – уçăмсăр уçăмлăх, виççĕмĕшĕн – вĕçĕмсĕр малашлăх. Виталий Станьялăн "вĕçĕмсĕр малашлăхĕ" – ăсхакăлĕн "перекетлĕ бухгалтерийĕнче" çуталса тăнăн туйăнать.

Хăçан паллашрăм-ха эпĕ унпа? Çамрăклăх урамĕнче! Акă, "ас тăвăм архивне" утмăлмĕш çулсен – пирĕн çамрăклăхăн – чăрсăр çилĕсем тустарма тытăнчĕç. Никита Хрущевăн "çемçелнĕ самани" нумай яш-кĕрĕме хамăрăн сăн-пите тишкерÿллĕ куçпа пăхма ирĕк пачĕ. Пур çĕрте те! Пултарулăхра та, экономикăра та, политикăра та!.. Анчах пултарулăх ĕçченĕсем /литературăра та, искусствăра та, музыкăра та/ кивелсехытса ларнă идейăсен тыткăнĕнчен хăтăлаймасăр – чылайăшĕ! – çĕнĕ ÿсĕм ăс-халне пăркăчласа тытатчĕç. Вĕсемех "идеологи надзирателĕсем" пулсаччĕ. Çавăнпа тăван çырулăха ăшă хум пек çĕкленсе килнĕ пирĕн ушкăн – сăвăçсем, тишкерÿçĕсем, калавçăсем – "Çамрăк коммунист" хаçат çумĕнче йĕркеленнĕ литература пĕрлешĕвне çÿретчĕ...

1962 çул! Литература вăрттăнлăхне хавхаланса, çунса-вĕресе шыракан яш-кĕрĕме ирĕклĕ калаçусем, тĕл пулусем кирлех пулнă çав. Виталий Станьял çамрăк çыравçăсен ертÿçи пулса тăчĕ. Урăхла каласан – шăв-шавлă эртелĕн уçă кăмăллă "администраторĕ". Герман Желтухин, Василий Дмитриев-Шашкар, Петĕр Эйзин, Вениамин Тимаков, Алексей Аттил, Николай Петров /художник тата сăвăç/ литература пĕрлешĕвĕн куллен-кунхи хăнисем пулсаччĕ. Ку ушкăнра эпĕ те пăхăнусăр сасă параттăм. Манăн çырулăхпа Александр Алка, Петĕр Хусанкай, Стихван Шавлы, Алексей Воробьев, Александр Кăлкан, Александр Артемьев кăсăкланатчĕç ĕнтĕ. Манăн шухăш-кăмăл вăйне хаклакансем пулчĕç вĕсем. Çавăнпа тишкерÿллĕ ăс-хал "идеологи надзирателĕсене" пăхăнсах кайман. Виталий Станьял манăн пăхăнсах кайман "карахтĕре" асăрханă-и е çук-и, анчах кирлĕ чухне лăпкăн та уçă кăмăллăн татса пама тăрăшатчĕ чăркăш ыйтусен йÿçĕ çимĕçне. Лайăх ас тăватăп: мана Петĕр Эйзин сăвăçăн çĕнĕ тавра курăмпа, хăйĕн сассипе кĕвĕленĕ сăввисене пăхса тухма хушрĕç. Килĕшрĕ те, килĕшмерĕ те! Классикăллă виçесене пач пăхăнманни юрĕха, – сăмахпа вырăнлă усă курасшăн мар тата! Мĕншĕн вăл "лĕпĕш лĕпĕртетсе" вĕçет тет-ха! Хам ăшăмра вара çак сăмахпа килĕшетĕп те! Ара, сăвăç çак сăмахпа лĕпĕш епле вĕçнин хăй евĕрлĕ ÿкерчĕкне тата унăн чĕрĕ хусканăвĕсене пăтратса парасшăн мар-и? Тата тепĕр иквиçĕ сăмах тупăнчĕ унашкалли! Мĕн тăвас тетĕн – тиркеме лекрĕ. Виталий Станьял çамрăк сăвăç хутне кĕчĕ: "Кашни автор хăйĕн сассипе ирĕклĕн калаçмалла мар-и? Унăн ирĕкĕ вăл. Эсĕ, Николай, кăштах тÿрккесрех калаçрăн". Темиçе çултан Виталий Станьялпа "Коммунизм ялавĕ" хаçатра хутшăнма лекрĕ. Литературăпа ÿнер ĕçĕсене тишкерсе, çул парса ларатчĕ вăл. Эпĕ 1962 çулсенче вун тăвата йĕркеллĕ сăвă виçипе – сонетпа кăсăкланаттăм. Çыраттăм та, пичетленеттĕм те – тăван чĕлхен асамлă вăйне ширааттăм.

Михаил Юрьев-Нямань /тахçанхи паллă сăвăç, ырми-канми ĕçчен журналист/ хаçатра пичетленекен литература ĕçĕсене тишкерсех тăратчĕ. Чылай çĕнĕ япала ун алли урлă пичетленсе тухмаллаччĕ. "Сонет" тенĕрен, ватă сăвăç çав тери асăрханулла пулса тăчĕ пулас. Унăн шучĕпе чăваш чĕлхипе кунашкал сăвва пачах çырма май çук пек туйăннă мар-ши? – Теветкел ку виçепе тахçанах çырать. Сонет виçине лайăх пĕлет вăл. Çăрттан пулла ишме вĕрентмелле мар ĕнтĕ, – хута кĕчĕ Виталий Станьял. Çапла вара "Коммунизм ялавĕн" страницинче манăн сонетсен ярăмĕ пичетленсе тухрĕ. Виталий Станьял пулăшнипе пулчĕ ку.

1999 çулхи пуш уйăхĕн вĕçĕнче Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче У.Шекспирăн эпĕ чăвашла куçарнă сонечĕсене пăхса тухрĕç. Виталий Станьял, ертÿçĕ пулса, манăн 3 çул ытла тăрăшса вăй хунă ĕçе пысăк хак пачĕ.

Виталий Станьялăн 60 çулĕ чăваш культурин нумай енлĕ, нумай сăнсăпатлă ĕçĕ-хĕлĕпе палăрса юлĕ. Ăна татах та ăнăçуллă çулсем, пысăк ÿсĕмлĕ кунсем сунас килет.

Утмăл çул вăл утмăл утăм –
çул-йĕрÿ çеç пултăр çутă.
Утмалли татах та пур –
пул телейлĕ те маттур!